26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ФЕВРАЛЬ 12 ЭРНЕКУН 34(6271) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ ЛОЗОВАЯ ХУЛИНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

Февралĕн 11-мĕшĕнче Украинăра пирĕн войскăсем татăклă атака тунă хыççăн ЛОЗОВАЯ хулине чугунçул узелне йышăнса илнĕ. Хулана чи малтан генерал-майор И. Я. КУЛАГИН юлташăн войскисем çĕмĕрсе кĕнĕ.

Трофейсем тытса илнĕ. **СОВИНФОРМБЮРО.**

Комсомолăн ялти организацийĕсене çирĕплетессишĕн

Вăйпитти арçынсем фронта, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме кайнă пирки, ялхуçалăхĕнчи ĕçсен йывăрлăхĕ йăлтах хĕрарăмсемпе çамрăксем çине ӳкрĕ.

Вăрçă ялхуçалăхĕн çĕршыв умĕнчи ответлăхне чакармарĕ çеç мар, пачах урăхла, вăл унăн умне мирлĕ вăхăтринчен те пысăкрах, ответлăрах задачăсем кăларса тăратрĕ. Тăван çĕршывпа фронт валли тырпул, аш-какай тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене вăхăтра, ытлăн-çитлĕн парса тăмалла. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен, комсомолăн колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисенчи организацийĕсен, уйрăмах партин пуçламĕш организацийĕсем сук çĕрте, партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшри пĕтĕм ответлăха хăйсем çине илмелле. Вĕсен колхозлă ялăн çыннисене вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтерме çĕре, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пурнăçлама çĕре мобилизацилемелле, колхозсен обществăллă хуçалăхне малалла тĕреклетсе пымалла. Акă мĕншĕн питех те çивĕччĕн тухса тăрать ĕнтĕ комсомолăн колхозсенчи тата машинно-тракторнăй станцисенчи организацийĕсене çирĕплетес ыйту.

Комсомол организацийĕсене çирĕплетес тени вăл — малта пыракан чи лайăх çынсене комсомол ретне активлăн суйласа илмеллине, çак майпа комсомол организацийĕсене политикăпа организацилĕх тĕлĕшĕнчен çирĕплетмеллине, комсомолăн çĕнĕ организацийĕсене тумаллине пĕлтерет.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн комсомолăн совет çамрăкĕсем умĕнчи авторитечĕ татах та ӳсрĕ. Тăван çĕршыв çак хаяр кунсене пурăнса ирттернĕ самантра малта пыракан çамрăксем хăйсен пурнăçне Ленинла-Сталинла комсомолпа çыхăнтараççĕ, унăн ретĕнче активлăн ĕçлеме тăрăшаççĕ. Çамрăк патриотсен çав паха шухăшкăмăлĕсене комсомол организацийĕсемпе вĕсен руководителĕсен çывăххăн туйса тăмалла. Малта пыракан çамрăксене комсомол ретне илсе, кашни колхозра, машинно-тракторнăй станцинче комсомол организацийĕсем тăвассишĕн кĕрешмелле.

Анчах пирĕн республикăра ку тĕлĕшпе ĕçсем чаплах мар-ха. Кашни колхозра комсомолăн пуçламĕш организацине тăвасси çинчен ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çулталăк каярах йышăннă постановление комсомолăн пирĕн республикăри нумай районсенчи организацийĕсем пурнăçламан. Халĕ республикăри 497 колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çук. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи 113 колхозран 35-шĕнче çеç комсомол организацийĕсем пур. Çавăн пекех Ишлей районĕнче 110 колхозран 49-шĕнче, Сĕнтĕр районĕнче 101 колхозран 38-шĕнче, Красноармейски районра 96 колхозран 37-шĕнче ку таринчченех комсомол организацийĕсем çук.

Ĕç çакнашкал япăххи партипе комсомол организацийĕсен çӳлте асăннă районсенчи руководителĕсене пачах та пăшăрхантармасть пулас. Комсомолăн Сĕнтĕр, Шăхасан, Çĕмĕрле, Советски районсенчи чылай пуçламĕш организацийĕсем япăхса кайнă, вĕсенче комсомолецсен пухăвĕсем хутран-ситрен çеç пулса иртеççĕ, комсомолецсем обществăллă ĕçсене хутшăнмаççĕ, член укçине тӳлемеççĕ, комсомолецсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе те начар ĕçлеççĕ, хаçат-журналсем йĕркеллĕн вуласа тăмаççĕ. Унти ВКП(б) райкомĕсем, пуçламĕш парторганизацисем комсомол организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Комсомола илес ĕç чылай организацисенче сӳрĕккĕн пулса пырать. Çĕмĕрле районĕнче, сăмахран, вăрçă пуçланиччченхи çулталăкра комсомол ретне 241 çамрăка илнĕ пулсан, вăрçăн 16 уйăхĕ хушшинче 189 çынна çеç илнĕ. Çак хушăра комсомолăн Сĕнтĕр районĕнчи 64 пуçламĕш организацийĕ, Шăхасан районĕнчи 50 организацийĕ пачах ӳсмен.

Çак çитменлĕхсене уçса палăртнă хыççăн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ комсомол ĕçĕ япăхса кайни тата парти организацийĕсем комсомолăн республикăри организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пыни çинчен ятарласа постановлени йышăннăччĕ. Унтанпа 2 уйăх ытла иртрĕ. Анчах ВКП(б) Шăхасан, Советски райкомĕсем вăл постановленирен ку таранччченех тивĕçлĕ вывод тумарĕç-ха. Шăхасанпа Советски районĕсенче кăçалхи январь уйăхĕнче çĕнĕрен пĕр организаци те организацилемен.

Комсомол ретне илес ĕç Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Канаш, Кувакино, Йĕпреç районĕсенче сӳрĕккĕн пулса пырать. Хĕрлĕ Чутай районĕнче январь уйăхĕнче комсомол ретне 11 çынна, Первомайски районра 16 çынна çеç илнĕ. Первомайски районра комсомол ретне январь уйăхĕнче илнĕ юлташсем хушшинче пĕр колхозник анчах, ыттисем пурте тенĕ пекех — вĕренекенсем.

Ăçта парти организацийĕсем комсомол организацийĕсене пулăшса, ĕçлĕн ертсе пыраççĕ, унта ĕç лайăхрах пыни курăнать. ВКП(б) Шупашкар райкомĕ (секретарĕ В. Караушев юлташ) юлашки вăхăтра ВЛКСМ райкомне, комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене тимлĕн пулăшса тăма пуçларĕ. Унта комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем те лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. ВЛКСМ Шупашкар райкомĕ (секретарĕ Миронова юлташ) комсомолецсемпе çамрăксене çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн явăçтарма тăрăшать. Колхозсенчи тимĕрçĕсене пулăшма 28 çамрăка уйăрнă. Вĕсем ялхуçалăх машинисене ремонтлаççĕ. Райкомол пуçарăвĕпе районра ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухас тĕлĕшпе 8 воскресник ирттернĕ, вĕсене 1.793 çын хутшăннă, 7.943 тенкĕлĕх машина пайĕсем пухнă. Январь уйăхĕнче кăна 10 çĕрте комсомол организацийĕсене çĕнĕрен организациленĕ, 122 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Колхозсенче çамрăксен вăрлăх сортлас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадисене тунă.

ВКП(б) райкомĕсемпе МТС политотделĕсен комсомол организацийĕсене пулăшас, ертсе пырас ĕçе тĕпрен вăйлатмалла. Çак никĕс çинче комсомол организацийĕсене партипе правительствăн решенийĕсене сăмахпа мар, ĕçпе пурнăça кĕртекенсем тумалла. ВКП(б) райкомĕсен çывăх вăхăтрах комсомолăн ертсе пыракан работникĕсене тупса çитермелле, пуçламĕш организацисен секретарĕсен составне çирĕплетмелле, комсомол организацийĕсене ертсе пыма ĕçре палăрнă, пултарулăллă комсомолецсене уйăрса лартмалла.

ВКП(б) райкомĕсен комсомол кадрĕсем хушшинче ĕçлессине вăйлатмалла, вĕсене тăтăшах пухса инструкциллĕ канашлусем ирттермелле, пĕр-пĕрин ĕç опычĕсемпе паллаштармалла.

ВКП(б) райкомĕсен, МТС политотделĕсен тата ВЛКСМ райкомĕсен çамрăксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса, çамрăксен малта пыракан пайне комсомол ретне илессине куллен, пĕр чарăнмасăр туса пымалла. Кашни колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене туса йĕркелемелле.

Ялти çамрăксен хальхи тĕп задачи—колхозсене çуракине хатĕрленме ĕçлĕн пулăшасси пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе хăшпĕр комсомолецсен ĕçре дисциплинăллă та организованно пулни, хушнă ĕç çине ăнланулăн пăхни çитмест-ха. ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен çавăн пек çамрăксене политикăллă тĕрĕс воспитани илме пулăшмалла, хăйсене дисциплинăллă тытма, умри задачăсене пурнăça кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешме хăнăхтармалла.

Комсомолăн ялсенчи тата МТС-сенчи организацийĕсен ĕçри çитменлĕхĕсене хăвăрт пĕтермелле, ялти комсомолăн йышне ӳстермелле, ăна фронта пулăшассишĕн, парти решенийĕсене пурнăça кĕртессишĕн татах та хастаррăнрах кĕрешекен боевой отряд туса хумалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 10-мĕшĕнче Украинăра пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн **Волчанск** хулипе чугунçул станцине, **Чугуев** хулипе чугунçул станцине, **Печенеги** ятлă район центрне, **Белый Колодезь** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктпа чугунçул станцине тытса илнĕ.

Азов тинĕсĕн хĕрринче пирĕн войскăсем **Приморско-Ахтарская** ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, тытса илнĕ. Азов тинĕс хĕрринчи тăрăха Дон варринчен пуçласа Приморско-Ахтарская патне çитиччен пĕтĕмпех противникран тасатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Февралĕн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 120 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, 3 поезда çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростов районĕнче пирĕн войскăсем тăшманпа хаяррăн çапăçнă. Пĕр участокра Н-ски часть тăшман пехотин батальонне аркатса тăкнă, трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн тепĕр стрелковăй чаçăн боецĕсем Новочеркасскпа Ростов хушшинчи чугунçул çине тухнă, вĕсем халĕ вăйлăн хирĕç тăракан тăшманпа çапăçаççĕ.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра тăшманăн контратакине сирсе янă чухне нимĕçсен 9 танкне тата пĕр бронемашинине персе çĕмĕрнĕ, 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн моторизованнăй часть халăх пурăнакан 5 пункта йышăнса илнĕ тата йышлă трофейсем тытса илнĕ.

* * *

Курскран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, Тим хули районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем 101 оруди, 33 миномет, 72 пулемет, 1.900 винтовка, 95 автомат, 259 автомашина, 68.000 артиллери снарячĕ, 240.000 патрон, 85 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата 17 тĕрлĕ склад тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Темиçе участокра тăшман артиллерирен пер тата контратакăсем туса, пирĕн чаçсене малалла кайма чарма хăтланнă. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă. Поныри станцийĕнче пирĕн боецсем 18.000 авиабомба, боеприпассен тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ январь уйăхĕн вĕçĕнче гитлеровецсен пысăк карательнăй экспедицийĕпе çапăçнă. Нимĕçсем партизансене хирĕç йĕлтĕрçĕсен 2 батальонне тата эсэсовецсен подразделенине янă. Тăвата кун хушшинче совет патриочĕсем тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсене каялла чакарнă. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата боеприпассем тиенĕ 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав поездăн хуралĕнчен темиçе çын вилнĕ.

* * *

Гитлеровецсем Краснодар крайĕнчи Рязанская станцинче çынсене вĕлерсе çӳренĕ. Фашистла ирсĕрсем «Путь Ильича» колхозăн председательне Федосья Лоричевăна, колхозника Сергей Симоненкăна тата унăн арăмне Наталья Симоненкăна, «Пламя Революции» колхозăн бригадирне Гавриил Беланова тата ытти нумай мирлĕ çынсене персе вĕлернĕ. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем çав станцăра мĕнпурĕ 200 çынна ытла вĕлернĕ. Каялла чакас умĕн нимĕçсем вăл станцăна çунтарса ярасшăн пулнă, анчах та Хĕрлĕ Çар хăвăрт тапăнса пыни вĕсене хăйсен вăрă-хурахла шухăшĕсене пурнăça кĕртме паман.

* * *

Берлинри тата Будапештри радио февралĕн 10-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерӳ сарнă: «Курск районĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Совет командованийĕ хула çумĕнчи пунктсене темиçе соединени янă, анчах Германи войскисем вĕсене малалла кайма чарнă». Берлинри мошенниксемпе вĕсен Венгрири хӳрешкисем намăса пĕлмесĕр суяççĕ. Курск çумĕнчи пунктсенче тата унăн таврашĕнче çапăçусем февралĕн 8-мĕшĕнчех Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем пĕтĕмпех çĕнтернипе тата нимĕçсем пысăк поражени тӳснипе вĕçленнĕ. Совет войскисем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Курскран хăваласа кăларнă, вăл хулана тытса илнĕ, халĕ ăнăçлăн хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ.

Гитлеровецсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра ĕçсем мĕнле пынине Германи халăхĕнчен пытарса усрама пысăк сăлтав пур. Нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград районĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкни Германи халăхне питех те пăшăрхантарчĕ. Гитлеровецсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕç войскисем çĕнĕрен пысăк поражнисем тӳсни çинчен тĕрĕссине калама хăраççĕ, пĕр чарăнмасăр суяççĕ. Анчах та суйнипе аякка каяймăн.

Февралĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростов районĕнче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла кайнă. Пĕр участокра нимĕçсем контратакăна 2 пехотнăй полк кĕртсе янă, вĕсене танксемпе артиллери пулăшса пынă. Н-ски соединенин боецĕсем гитлеровецсен контратакине сирсе янă, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ темиçе рубежне тытса илнĕ.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем тăшманăн пехотипе танкĕсен виçĕ контратакине сирсе янă та, малалла кайса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли вырта юлнă. Тепĕр участокра пирĕн противотанковăй артиллерипе бронебойщиксем нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем 7 оруди, 19 пулемет тата боеприпассем тиенĕ 12 автомашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Курскран кăнтăралларахра совет танкисчĕсем гитлеровецсен темиçе подразделенине пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Вахмистров юлташ, старши пулеметчик-водитель Манаков юлташ, радист Скуднов юлташ тата артиллерист Кузинов юлташ ларса пыракан танк хытă пынă çĕртех нимĕçсен колонни хушшине кĕрсе кайнă. Танкистсем тупăсемпе пулеметсенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса, тăшманăн пĕр рота ытла пехотине, 18 противотанковăй орудине тата çар грузĕсем тиенĕ 100 лавне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Поныри районĕнче пирĕн войскăсем икĕ кун хушшинче противникран 14 оруди, 4 танкетка, 9 миномет, 22 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Н-ски часть малалла куçса пырса нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 4 зенитнăй оруди тягачсемпе пĕрле, 50.000 патрон, грузсем тиенĕ 60 лав тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле район центрĕнче вырнаçнă нимĕç гарнизонне тапăннă. Совет патриочĕсем темиçе вунă гитлеровеца вĕлернĕ тата нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен 2 складне çунтарса янă.

Украинăри партизансен тепĕр отрячĕ нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă, хресченсенчен туртса илнĕ тырăн темиçе складне тытса илнĕ. Партизансем халăха 700 тонна тырă валеçсе панă.

* * *

Югослави патриочĕсем нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсене хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Теслич патĕнче партизансем тăшманăн пур хаяр атакисене те сирсе янă. Дрвент патĕнче патриотсем пĕр миномет, 5 пулемет, 22.000 патрон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Врполь районĕнче партизансен ушкăнĕ нимĕçсен 4 танкне сирпĕнтерсе янă, 50 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Словенире партизансем тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне тытса илнĕ, итальянецсен çавăнти гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăça кĕртнĕшĕн Александр Игнатьевич Молодчий иккĕмĕш хут Совет Союз Геройĕн званине илме тивĕçлĕ пулнă. ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх А. И. Молодчие иккĕмĕш хут «Золотая Звезда» медальпе наградăланă.

Ӳкерчĕк çинче: Икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ Александр Игнатьевич Молодчий.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фашистсен Белоруссири террорĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, **февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).** Фронт линийĕ урлă каçса килнĕ çынсем Совет Белоруссийĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенче фашистсем туса пыракан юнлă террор çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Нумай ялсемпе местечкăсенче нимĕçсем мĕнпур белорусс халăхне вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсем кăкăр ачисене те хĕрхенсе тăман.

Витебск облаçĕнчи Ушачски районри Жари ялĕнче хăрушла трагеди пулса иртнĕ. Çĕрле, çынсем пурте çывăрнă чухне, фашистсен факельщикĕсем çуртсене вут тивертме тытăннă. Çунма пуçланă çуртсенчен чупа-чупа тухакан çынсене гитлеровецсем автоматсемпе пистолетсенчен пере-пере пăрахнă. Тĕттĕм каç пушар çутипе çуталнă. Тавралăхра вут-кăварта пĕтекен стариксемпе хĕрарăмсем тата ачасем йынăшнă сасă илтĕнсе тăнă. Жари ялĕнче 55 çурта çунтарса янă. Вутра пĕтнисĕр пуçне, нимĕçсем 67 çынна тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ, вĕсем хушшинче виçĕ уйăхран пуçласа 4 çула çитиччченхи ачасем 13 ача пулнă. Андрей Шаппона тата унăн амăшне Мария Лукьяновна Шаппона гитлеровецсем ломсемпе тата йывăç чукмарсемпе çапа-çапа вĕлернĕ. 5 ачана фашистсем чĕрĕллех шăтăка пăрахнă. Вилес патне çитиччен хĕненĕ Семен Сальникова нимĕçсем çунакан çуртра çунтарса янă, Дмитрий Паршенкăна пăвса вĕлернĕ, Василий Петухова—кинжалсемпе вакласа пĕтернĕ. Жари ялĕнчи нумай мар çынсем кăна пĕтесрен çăлăнса тухма пултарнă. Фашистсен çавтери хăрушă ĕçĕсем çинчен вĕсем каласа панă та ĕнтĕ.

Витебск облаçĕнчи Белое ялĕнчи çынсене те гитлеровецсем çавăн пекех тискеррĕн асаплантарнă. Фашистла вăрă-хурахсем унта ир еннипе пырса кĕнĕ те ялти çынсене çаратма, вĕлерме тытăннă. Филипп Шиловича фашистсем тăнран ярииччченех хĕненĕ те кайран çунтарса янă. Питĕрсе хурса вут тивертнĕ çуртсенче 25 çын пĕтнĕ.

Нумаях пулмасть фашистсем Меховое ялĕнчи çынсене сивĕ сарайсене хăваласа пухнă пулнă. Унта нумай ачасем шăнса вилнĕ.

Гитлеровецсем çавăн пекех тата Вилейка облаçĕнчи Шарковщински районри Куштали ялне те вут тивертсе çунтарнă. Çунакан яла нимĕç салтакĕсем çавăрса илнĕ те тарса хăтăлма пăхакан çынсене пурне те автоматсенчен персе, гранатăсем ывăтса тискеррĕн пĕтере-пĕтере тăкнă. Пĕтĕм ялтан виçĕ çын кăна чĕррĕн тарса юлнă. Вĕсем тарасана пытанса юлнă пулнă.

Вилейка облаçĕнче нимĕç оккупанчĕсем юлашки вăхăтра кăна вуншар ялсене пурăнакан çынсемпе пĕрлех пĕтере-пĕтере тăкнă.

Е. Корявичев.

Фронтовиксен çемьисене пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Хамăр корр.).** Кушарти «Свобода» колхоз (председателĕ Т. Ефимов юлташ) фронтовиксен çемьисене лайăх пулăшса тăрать.

Колхозник Яков Романов юлташ вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайнă. Унăн çемьинче виçĕ ача тата арăмĕ тăрса юлнă. Арăмĕ часах вилнĕ. Виçĕ ача вара тăлăха тăрса юлнă. Колхоз Романов юлташăн ачисене вăл фронтран таврăниччен пăхас ĕçе хăй çине илнĕ. Вĕсене 41 пăт тырă, 150 килограмм аш-какай, 100 литр сĕт, 10 килограмм çăм парса пулăшнă. Юлашки вăхăтра колхоз тăрăшнипе вĕсене ача çуртне леçнĕ. Колхоз вĕсене халĕ те пулăшса тăрать.

Нимĕç захватчикĕсем пирĕн тăван çĕршыва вăрă-хурахла тапăнса кĕрсен, Шманцерăн çемьи фронт çывăхĕнчен Чăваш республикине куçса килнĕ. Унăн икĕ çамрăк ача пулнă. Шманцер юлташ «Свобода» колхоза килсен нумаях та пурăнайман—Хĕрлĕ Çара кайнă. Колхоз халь Шманцерăн ачисене пулăшса тăрать. Вăл икĕ ача валли 32 килограмм какай, 4 центнер тулă çăнăхĕ панă. Кусемсĕр пуçне, икĕ ачана çĕнĕ пальто, пĕрер мăшăр çăматă панă.

Кунашкал тĕслĕхсем колхозра татах та пур. Акă, Клементьев Петр çемьинех илер. Вăл фронта кайиччен колхозра активлăн ĕçленĕ. Колхоз унăн ватă амăшĕпе виçĕ çамрăк шăллĕне тырă, çу, сĕт парса пулăшса тăрать.

Осипова Евдокия — тăлăх хĕрача. Вăл çамрăк-ха, ялти пуçламĕш шкулăн пĕрремĕш класĕнче вĕренет. Ашшĕнчен тăлăха юлсан, ăна икĕ пиччĕшĕ пăхса пурăннă. Юлашки вăхăтра унăн икĕ пиччĕшĕ те Хĕрлĕ Çара кайнă. Халĕ Евдокия Осиповăна колхоз пулăшса тăрать. Шкулта лайăхрах вĕренсе пытăр тесе, колхоз ăна пальто çĕлесе панă. Унсăр пуçне, пулăшу кассинчен ăна тырă парса тăраççĕ.

А. Трофимова илер. Вăл хăй колхозра ĕçлеймест. Унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче, нимĕç фашисчĕсене хамăрăн тăван çĕршывран çапса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсен çемьине колхоз 180 килограмм тырă, çу т. ыт. те парса пулăшнă.

Колхозра фронтовиксен çемьисем сахал мар. Вĕсене колхоз яланах пулăшса тăрать. Вут-шанкă та хатĕрлесе парать.

С. Шадин.

Танксемпе самолетсем тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Сталин юлташ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ патне пирĕн республикăри ĕççыннисене танксен колоннисене тума укçа пухнăшăн иккĕмĕш хут тав туса янă телеграммăна сӳтсе-явнă хыççăн, Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума татах 60.000 тенкĕ укçа пухрĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухассине вăйлатрĕç. И. Краснов — 8.000 тенкĕ, И. Феофанов — 2.000 тенкĕ, А. Краснова — 1.000 тенкĕ пачĕç. Тăлăха юлнă 16 çулхи çамрăк—Алексей Краснов боевой самолетсем тума 500 тенкĕ пачĕ. Çапла вара комсомолецсемпе çамрăксем пурĕ 25.000 тенкĕ пухрĕç. Укçа пухасси вăйланса пырать.

Н. Виноградов.

Пур çĕрте те перекетлĕх кирлĕ

Предприятисем умĕнче тăракан чи хисеплĕ задачăсенчен пĕри вăл— продукции хăйне ларакан хакне йӳнетсе пырасси. Çакна пурнăçлас пулсан, пирĕн материалсене чĕрĕ вăйра, электроэнергие, сунтармалли япаласене тирпейлĕ расходламалла, вĕсене куллен перекетлесе пымалла.

Çак ĕçе Çĕмĕрле комбинатĕнче мĕнле туса пыраççĕ-ха?

Иртнĕ çулăн юлашки уйăхĕсенче электроэнергие, пăса перекетлес тĕлĕшпе организацилле-техникăллă мероприятисем туса ирттерме палăртнăччĕ. Çак мероприятисене кашни цехпа отделрах рабочисен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă, çав пухусенче вара конкретлă ĕçсем тума палăртнă.

Кĕске вăхăт хушшинчех эпир электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе палла ĕçсем тума пултартăмăр. Ку тĕлĕшпе çаксене туса ирттертĕмĕр: пĕр трансформатора çута та, вăл та пăма пултарнине шута илсе, эпир тепĕр трансформатора ĕçлеме чарăнтартăмăр. Çапла туни производствăна йĕркеллĕ ĕçлеттерме чăрмантармарĕ, пачах урăхла, декабрьпе январь уйăхĕсенче кăна вăл пĕр трансформатора ĕçлеме чарнипе 17.220 киловатт-сехет электроэнергие перекетлерĕмĕр.

Иккĕмĕш мероприяти вăл—цехсенчи пурăнмалли çуртсене электропроводсем ĕçлеттерме чарни. Ку пире икĕ уйăх хушшинче 6.480 киловатт-сехет перекетлеме май панă. Уйрăм цехсенче пурăнмалли çуртсене тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, чылай çĕрте çутă ахаль çунса ларнине палăртнă. Çавăн хыççăн вара çутă ахальлĕн çунса ларассине пĕтерес тесе, хăшпĕр цехсене туса ирттертĕмĕр. Кунсăр пуçне цехсен ĕçĕнчен чухне, е станок, агрегат ахаль ĕçлеме чарăнсан та, электроçутта сӳнтерни. Çак мероприятисем те пире декабрьпе январь уйăхĕсенче 11.000 киловатт-сехет перекетлеме май парс.

Çапла вара, икĕ уйăх хушшинче комбинатра тата пурăнмалли çуртсенче туса ирттернĕ мероприятисем пирĕн комбината 49.400 киловатт-сехет энерги перекетлеме пулăшрĕç. Урăхла каласан, эпир 3.950 кубла метр вутă перекетлерĕмĕр.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче пирĕн коллектив пăса перекетлес тĕлĕшпе те хăшпĕр ĕçсене турĕ. Производствăна тата пулăшакан, цехсемпе отделсене пăс паракан хуçалăхсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн котельнăйсене ремонтласа туса ирттерни кăна комбинатăн 480 тонна пăс перекетлеме май панă.

Кунсăр пуçне тата цех корпусĕсене, пурăнмалли çуртсене пăрлă юсаса тухнă, кирлĕ çĕре чĕрнисене партăн, кашни кирлĕ чухнĕ çес паракан туса пынă. Çак мероприятисем комбината 1.720 тонна пăс перекетлеме май панă. Çапла вара икĕ уйăх хушшинче пирĕн коллектив 2.960 тонна пăс перекетлерĕ е вăл 2.960 кубла метр вутă перекетлени пулать.

Анчах электроэнергипе пăса перекетлес тĕлĕшпе тунă ĕçсене çапах ситеслĕ теме çук. Паллах, эпир вĕсене татах та аталарах перекетлеме пултаратпăр, перекетлеме тивĕçлĕ те. Хăшпĕр çĕрте çутăпа халĕ те йĕркеллĕн усă курма пĕлмесĕç-ха. Уйрăм цехсене [illegible] лампăсене çунса лараççĕ. Çапла, сăмахран, [illegible] юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра час-часах смена пĕтнĕ хыççăн лампăсем çунса лараççĕ, е пĕчĕккех лампăна ĕçлеме май пур çинче пысăк лампăсем çутатаççĕ. Завхоз Пăтиллина хăйĕнче [illegible] 300 ваттлă лампа çунать. Ахальтен эпир пĕтĕм цех пĕр уйăх хушшинче кăна 680 киловатт-сехет электроэнергие ытлашши расходлать.

Никитенко юлташ ертсе пыракан цехра та энерги [illegible] расходлаççĕ. Инструментальнăй тата производствăллă хуçалăхсенче [illegible] 300 ваттлă лампăсем çунаççĕ.

Пур çĕрте те перекетлесси—вăрçă вăхăтĕнчи закон пулса тăрать. Çавна пирĕн ялан асра тытмалла. Предприятисенче электроэнергие, сунтармалли материалсене перекетлес ĕçе партипе хуçалăх руководителĕсен кăна мар, пĕтĕм рабочисен активлăн хутшăнса туса пымалла.

К. Димитриев.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи завком председателĕ.

Потребкоопераци работникĕсен канашлăвĕ

КАЛИНИНО. Çак кунсенче потребкоопераци системинче ĕçлекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта судпа прокуратура тата банк работникĕсем те пулчĕç. Канашлу 1942 çулта тавар çаврăнăш планне тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес плана мĕнле тултарни çинчен сӳтсе-яврĕ.

1942 çулти тавар çаврăнăш планне тултарас тĕлĕшпе райпотребсоюз çителĕксĕр ĕçлесе пынă. Государство планпа паракан дефицитлă таварсене те кӳрсе килменнисем пулнă. Сăмахран, IV-мĕш квартăлта пĕр Калинино сельповĕ кăна 293.104 тенкĕлĕх тавар кӳрсе килмен.

Кооперацин пурлăхне, укçи-тенкине çаратакансене хирĕç кирлĕ пек кĕрешменнине пула, 1942 çулта Алгазино сельповĕнче 4.140 тенкĕ, Юманай сельповĕнче 3.136 тенкĕ, Сăкăт сельповĕнче 6.587 тенкĕ растрата тунă. Суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлеме çĕнĕ работниксене илнĕ чухне вĕсем камне лайăххăн тĕрĕслемесçĕ. Çавна пула хăшпĕр сельпосене кахалсем, çапкаланчăксем кĕрсе тулнă та ĕç дисциплинине аркатса яма тытăннă. Сăмахран, Ермошкă сельповĕн Асăкасси отделенинчи продавщица З. Попова ĕç вăхăтĕнче Шупашкарта çӳресе пĕр уйăх ытла прогул тунă.

Канашлура тухса калаçакан юлташсем (Андреев — райпрокурор. М. Андреев—халăх судьи, И. Толстов — райпотребсоюз председателĕ) асăннă çитменлĕхсене пĕтерсе суту-илӳ ĕçне йĕркелесе ямалли майсене палăртрĕç. Канашлу растратчиксемпе прогульщиксене суда пама йышăнчĕ.

Б. Шориков.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизаци çуракине хатĕрленме вăйлăн пулăшать

ШАХАСАН. Партин Чуракассинчи пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Я. Ильин юлташ) коммунистсене колхоз производствинче ĕçлеме тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Колхозри коммунистсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Коммунистсем пулăшнипе ялсоветне кĕрекен колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Шмидт ячĕпе тăракан тата «III Интернационал» колхозсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уява çуракине пур енлĕн хатĕрленнипе кĕтсе илеççĕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз уя 1.800 лав тислĕк кăларчĕ, 68 гектар çинче юр тытрĕ, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл тата фекали чылай хатĕрлерĕ. Çак кунсенчех плугсемпе сӳресене юсаса çитереççĕ.

П. Иванов.

Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ çĕрте

ИШЛЕЙ, февралĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн «Красный танк» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ А. Сидоров) колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Кашни комсомолеца агитаторсем пулма бригадирсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата тăван çĕршыврипе ютçĕршывсенчи лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе çамрăксем колхоза çуракине хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе воскресник турĕç. Воскресникe комсомолецсемпе комсомолкăсемсĕр пуçне 18 вĕренекен хутшăнчĕ. Вĕсем пĕр кун хушшинче 26 гектар çинче юр тытрĕç, 12 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 16 центнер кĕл пухрĕç.

З. Митрофанова.

МАШИНĂСЕМ ЮР АЙĔНЧЕХ ЛАРАÇÇĔ

КАЛИНИНО. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозра ку тарана çитсе те çуракине хатĕрленме тытăнман. Ялхуçалăх машинисене юсама пуçламан, вĕсенчен хăшпĕрисем халĕ те юр айĕнчех лараççĕ. Плугсен, сӳресен туртисем çителĕклĕ мар. Вăрлăх уйăрса çитермен.

Колхоз паянхи кун та иртнĕ ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене вĕçлемен, государство умĕнчи обязательствăсене парса татман. Çапла пулсан та кунта тырра аванс шучĕпе нумай салатса пĕтернĕ. Сӳс-кантăр ăçта пăхнă унта сапаланса выртать. Колхоз председателĕ С. Данилов хăйĕн ĕçне ответлăн туса пыма тăрăшни кирлĕ. Çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

И. Федигин.

Ют çĕршывсенче

Англи хаçачĕсем Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсемпе радио Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ çинчен нумай çыраççĕ, нумай калаççĕ. Лондонри радио паян çапла каларĕ: «Вăрçă обозревателĕсем наступлени тăвакан вырăссем хыççăн ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Февралĕн 8-мĕшĕнче Мускав Курска илни çинчен пĕлтерчĕ, февралĕн 9-мĕшĕнче Белгорода илни çинчен пĕлтерчĕ. Çак фактсем вĕсем вырăссем питĕ вирлĕн тапăнса пынине кăтартаççĕ», терĕ.

«Дейли экспресс» хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ совет командованийĕн стратегиллĕ планне ăнăçлăн пурнăçласа пынине палăртать. «Совет стратегийĕ, — тесе çырать вăл, — Германи командованине питех те пысăк йывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕ. Сталин вăрçă ĕçĕсене питĕ лайăх планлани тата вăл плана совет генералĕсем пурнăçа çав тери лайăх кĕртсе пыни Гитлерпа унăн генералĕсене çапса ӳкерчĕç. Германи çарĕ халхи вăхăтра тӳсекен çухатусем пек çухатусем историре урăх пулман».

«Ньюс кроникл» хаçат çапла çырать: «Курска илнĕ ĕнтĕ. Совет наступленийĕ кунсеренех вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Çакă вăл пысăк майсем туса парать. Анчах та çав майсемпе туллин усă курас тесен, çывăх вăхăтрах Европăра иккĕмĕш фронт уçмалла».

Англин информаци министерстви Хĕрлĕ Çар Курска илни çинчен пĕлтерсе çапла калать: çак çĕнтерӳ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри çапăçура çĕнĕ тапхăр пуçласа ярать, тет. «Хĕрлĕ Çар, — тенĕ çав пĕлтерӳре, — Германия пĕлтĕр çĕнтерсе илнине пурне те пĕтерсе хучĕ çеç мар, вăл тата нимĕçсен Кăнтăр Российăра тытса илнĕ пысăк района халиччен хăйсен аллинче тытса тăма пулăшса тăнă укреплениĕсене те анлăн татрĕ. Çыхăнăвăн паха центрĕ пулса тăракан Курска çав тери сасартăк тытса илни питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать».

Турци пичечĕ Аданри калаçусем çинчен

СТАМБУЛ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Турци хаçачĕсем юлашки кунсенче Черчилль Аданра туса ирттернĕ калаçусем çинчен статьясем çырса кăларнă. «Улус» хаçат Аданри калаçусем паха вырăн йышăнса тăнине палăртать. «Англин ответлă руководителĕ, — тесе çырать хаçат, — пэллах, Турцин делегацине союзниксем тĕнчери событисем çине мĕнле пăхни çинчен ăнлантарса панă, çавăн пекех Турци делегацийĕнчен те Турци мĕнле позици йышăнса тăни çинчен уçăмлă ответ илнĕ. Çак енĕпе пăхсан, Аданри тĕлпулу Турципе Англи хушшинчи союзăн паха результачĕ пулса тăрать, çакă вăл икĕ çĕршыв пĕр-пĕрне шанса тăрасси аталанса, çирĕпленсе пынине кăтартса парать».

Хаçат çакна палăртать: Турципе Британин государство деятелĕсем çав калаçусем вăхăтĕнче Европăри лару-тăрăва, уйрăмах Турцие тӳрремĕнех интересленттерекен лару-тăрăва, тĕплĕн пăхса тухнă, çав тĕп ыйтусем çине вĕсем пĕр пек пăхнине палăртнă.

«Икдам» хаçат редакторĕн Даверăн шухăшĕпе, Черчилльпе Рузвельтăн Касабланкăри тĕлпулăвĕ хыççăнах пулса иртнĕ Аданри калаçусем Англипе Турцин туслăхне кăна мар, çавăн пекех тата Турципе США хушшинчи туслăха та çирĕплетеççĕ.

Де Голль Францин Çурçĕр Африкинчи политикăллă строй çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: кĕрешекен Францин движенине Çурçĕр Африкăна мĕнле майпа лайăхрах куçарма пулать тесе панă ыйтăва хирĕç ответлесе, генерал де Голль çапла каланă: „Çавна тума чи малтан республика законĕсене тата, пуринчен малтан, ăнланупа пичет ирĕклĕхне вăя кĕртмелле. Çакна тунă хыççăн вара французсем пĕрлешессине нумай кĕтме кирлĕ мар“, тенĕ. Де Голль хăй çакна ăнланманни çинчен пĕлтернĕ: „Союзниксем Çурçĕр Африкăна аннăранпа тăваттăмĕш уйăха кĕнĕ пулин те, 15 пин француз, союзниксемшĕн тата хăйсен тăван çĕршывĕшĕн ĕçлеме тăрăшаканскерсем, халĕ те-ха тĕрмере лараççĕ“.

Де Голль малалла çапла каланă: кĕрешекен французсен куçĕпе пăхсассăн,—кĕрешекен французсем мĕнпур Франци халăхĕн шухăшне тытаççĕ,—французсен Çурçĕр Африкăра туса хунă кирек мĕнле çĕнĕ государство стройĕ те пĕр тĕллев тытма тивĕçлĕ—çакă вăл Францие ирĕке кăларассишĕн тата унăн ирĕклĕ учрежденийĕсене ура çине тăратассишĕн французсен мĕнпур вăйĕсене пĕрлештерессипулса тăрать. Çавна ăна государство стройĕ уйрăм çынсем хăйсен аллине тытса илнĕ власть çинче мар, республика законĕсем çинче никĕсленсе тăрсан кăна тума пулать. Жиро генералăн юлашки вăхăтри декречĕсем, чăн та, çав еннелле ярса пуснă пĕрремĕш утăмсем пулса тăраççĕ пулин те, вăл туса хунă режим республика законĕсемпе халĕ те усă курмасть-ха.

Де Голль çапла каланă: вăл хăй Жиро генералпа туса ирттернĕ калаçусем лару-тăрăва уçса параймарĕç-ха, тенĕ.

Кĕрешекен Францин шухăшĕпе, Жиро генералăн юлашки вăхăтри заявленийĕсенче кĕрешекен Францие кăмăла килекен темиçе пункт пур, тесе ответленĕ де Голль.

Юлашкинчен де Голль çапла каланă: Çурçĕр Африкăра республика законĕсен никĕсĕ çинче суйланă представительсенчен нациллĕ Совет туса хуни кирлĕччĕ, тенĕ.

Япони войскисем Гвадалканар утравĕнчен тухса кайни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США тинĕс-çар министерстви Гвадалканар утравĕ çинче (вăл Соломон утравĕсенчен пĕри пулса тăрать) вăрçма тытăннăранпа Япония мĕнле çухатусем тӳсни çинчен данăйсем пичетлесе кăларнă. Çав данăйсем тăрăх, Япония 797 самолет тата 57 карап çухатнă. Кунсăр пуçне, унăн 7 карапне путарнă пулас тата 102 карапне сиенленĕ. Пĕлтĕрхи ноябрь вăррине çав утрав патĕнче пулса иртнĕ çапăçура японецсен сахалтан та 30.000 çын пĕтнĕ. Кунсăр пуçне, вĕсен тата десантсем антарнă чухне 9.000 çын пĕтнĕ. США тинĕс-çар министерствин даннăйĕсем тăрăх, 12.000 японеца яхăн тинĕс çинчи çапăçусенче путнă.

ТОКИО, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Япони войскисем Бунаран (Çĕнĕ Гвинея) тата Гвадалканар утравĕнчен (Соломон утравĕсенчен пĕри) тухса кайни çинчен пичетленĕ официальнăй пĕлтерӳре çапла каланă: çав районсенче çапăçма тытăннăранпа японецсен 16.743 çын пĕтнĕ. Япони авиацийĕ 139 самолет çухатнă. Çав пĕлтерӳре тата çапла каланă: противникăн 25.000 çын вилнĕ унăн 230 самолетне персе ӳкернĕ е çĕр çинче пĕтерсе тăкнă, 30 орудине ытла тата 25 танкне ытла пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенче

Гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче юнлă террорăн режимне малалла тытса пыраççĕ. Анчах çапах та, çав çĕршывсенчи Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем çĕнĕрен те çĕнĕ саботажсем туниичe, оккупантсен пусмăрне хирĕç уççăнах протестленинче палăрса тăраççĕ.

АФИ агентстви панă хыпар тăрăх, Германин оккупациллĕ влаçĕсем „Эльзасра Германи тăшманĕсем майлă кĕрешме хăтланакан мĕнпур çынсене пĕтерсе тăкма шут тытнă“, тесе пĕлтернĕ.

Страсбургри çар трибуналĕ нумаях пулмасть Эльзасри темиçе çынна, вĕсем французсен тыткăнлекнĕ çар çыннисене тарма пулăшнă тесе, вĕлермелле приговор йышăннă. Виçĕ арçынпа икĕ хĕрарăма, вĕсем Германие хирĕç кĕрешнĕ тесе, вĕлермелле приговор йышăннă. Мюлузпа Кольмарта кашни кунах нумай çынсене арестлеççĕ, вĕлереççĕ. Гитлерăн Эльзасри правителĕ Вагнер çывăх вăхăтсенчех «изменниксемпе противникăн агенчĕсене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кампани» пуçласа ярасси çинчен пĕлтернĕ.

Рейтер агентстви Прагăра 26 çултан пуçласа 54 çула çитиччен вунă чеха вĕлерни çинчен пĕлтерет. (ТАСС).

Выльăх апатне лайăхлатар, нумайрах хатĕрлер

Чăваш республикинчи колхозсенче тухăçлă (продуктивнăй) выльăх-чĕрлĕх хисепĕ 1942 çулта малалла ӳсрĕ. Вĕсен апат-çимĕç базиĕ те лайăхланчĕ. 1942 çулта выльăхсен шултăра апатне 1941 çултинчен 13 процент ытларах (вăл шутра утă 30 процент ытларах), сĕтеклĕ апатне 32 процент ытларах хатĕрленĕ.

Анчах та çак результатсемпе лăпланса ларма юрамасть. 1942 çулта выльăхсен шултăра апатне нумай хатĕрленĕ пулсан, сĕтеклĕ апат хатĕрлес плана 86 процент çеç тултарнă. Выльăх апатне ӳстерес ĕç выльăх-чĕрлĕх хисепĕ ӳсниниен юлса пырать, уйрăмах вăл выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстерес задачăсенчен нумай кая юлса пырать.

Чăваш республикинчи колхозсенче выльăх апачĕ уйрăмах пахалăх енчен çителĕксĕр. Шултăра апатра улăм тата арпа-пучах пысăк вырăн йышăнса тăрать: выльăха панă кашни килограмм утă пуçне 4 килограмм улăм тивет. Елчĕк, Чкаловски, Тăвай тата Канаш районĕсенче выльăх апатĕнче утă тата сахалтарах вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесессĕн вăл районсенче улăхсем сахал. Республикипе илсен, выльăхсен шултăра апатĕнче (улăма условно утă çине куçарса шутласан) утă 1941 çулта 32 процент, 1942 çулта 37 процент йышăнса тăнă.

Кăçал та выльăх апатĕнче кĕрхипе çурхи тырăсен улăмĕ тата арпа тавращĕ ытларах вырăн йышăнса тăнă пирки, пирĕн колхозсен çав апата выльăх-чĕрлĕхе лайăхрах майсемпе çитерес ыйту çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Ыраш улăмне тата çурхи тырăсен улăмне те выльăхсене ытларах пăтратни туса çитермелле, арпа-пучаха тăварлă шывпа йĕпетсе памалла. Çакăнпа пĕрлех пирĕн 1943 çулта выльăхсен шултăра апатĕнче утă хисепне ӳстерес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать. Утă вăл выльăх апачĕн чи хаклă, чи паха пайĕ пулса тăрать, унăн пайне апатра çулран-çул ӳстерсе пымалла.

Улăхсен лаптăкĕ пирĕн пысăк мар, вăл пур колхозсемшĕн те паллă. Çавăнпа утă нумайрах туса илес ыйтупа пирĕн куллен интересленмелле. Улăхсен тухăçлăхне ӳстермелле, курăксем акса тăвас ĕçе анлăрах туса пымалла. Утă улăхĕсене çӳпçапран, çумран тата выльăх-чĕрлĕхе сиенлĕ курăксенчен тасатмалла,- вырăнти удобренисем хурса çемçетмелле. Выльăх апатĕнче лайăх утă мĕн чухлĕ нумайрах—çавăн чухлĕ выльăх апатне тырă сахалтарах кайнине яланах асра тытса тăмалла.

1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксен утăлăх çĕр лаптăкĕ пирĕн республикăра 75 пин гектара çити ӳсрĕ пулсан, кăçал курăксем çулса пухмалли çĕр лаптăкĕ 65 пин гектара яхăн çеç пулать пулмалла. Çакă вăл пирĕн колхозсем 1942 çулта утăлăх курăкăн çĕр лаптăкне акса çитерменнинчен килчĕ. Çакна шута илсе, колхозсен пĕр çулта ӳсе пулакан курăксене кăçал нумайрах акма тăрăшмалла. Кăçалхи çуркунне колхозсен викăпа сĕлле тата ытти курăксене нумайрах акма тăрăшмалла. Çакăнпа пĕрлех иртнĕ 1942 çулта тунă йăнăша кăçал тепĕр хут тăвассинчен сыхланмалла. Клевер, люцерна тата ытти нумай çул хушши ӳсекен курăксене кăçал кашни колхоз государство кăтартса панă чухлĕ акмалла, вĕсене тырăсем çине те тата таса уя та çителĕклĕ таран акса хăвармалла. Çавăнпа та курăксен вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлес ыйту халь кашни колхоз умĕнче тăракан тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Пĕтĕм республикипе илсен, халь эпир акмалли курăксен вăрлăхĕн виççĕмĕш пайне çеç хатĕрленĕ-ха. Вăхăта пĕр куна та кая хăвармасăр, колхозсен халь клевер тата ытти курăксен вăрлăхĕсене шĕкĕлчесе хумалла. Курăксен вăрлăхĕсене аякран илсе килесси çине кăçал пĕр колхозăн та шанса лармалла мар.

Улăм, арпа-пучах, утă тата тĕрлĕрен ытти курăксем хĕллехи вăхăтра выльăхсен тĕп апачĕ пулса тăраççĕ. Анчах сĕтеклĕ апатсăр—тымар-çимĕçсĕр, силоссăр—выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне вăйлăн ӳстерме çук, çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерме хĕн. Кăçал пирĕн республикăри колхозсем çак сĕтеклĕ апатсене те нумай хатĕрленĕ, анчах вĕсем çапах обществăллă пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе çитерме çитмеççĕ. Республикăри хăшпĕр колхозсем хатĕрлесе хунă силоспа та кирлĕ пек усă курмаççĕ. Халĕ, фермăсенчи выльăхсем пăранланă вăхăтра, выльăх апачĕн рационĕнче сĕтеклĕ апат уйрăмах нумай пулмалла. Сăвакан ĕнесен тухăçлăхне хăпартма сĕтеклĕ апат-çимĕç кирлĕ. Çилос çитерме пуçлас пулать, тымар-çимĕçсем памалла.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕ валли тымар-çимĕçсем лартса тăвас ĕç те нумай колхозсенче кирлĕ вырăн йышăнман-ха. Сĕтеклĕ апатсен хисепĕнче выльăх кăшманĕ, турнепс тата ытти тымар-çимĕçсем 7—8 процент çеç йышăнаççĕ, çĕрулми 30 процент йышăнать, ытти вара йăлтах силос. Çулсеренех колхозсенче туса илнĕ çĕрулмин чĕрĕк пайĕ выльăх-чĕрлĕх апатне кайса пырать. Çакă вăл нумай енчен тымар-çимĕçсен тухăçлăхĕ питĕ çителĕксĕрринчен килет. Чăнах ĕнтĕ, хăшпĕр колхозсем (тĕслĕхрен, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз) тымар-çимĕçсене гектартан 1000 центнер туса илеççĕ, анчах 1942 çулта тымар-çимĕçсен тухăçлăхĕ вăтамран илсен 100 центнертан ытла пулмарĕ. Сăлтавĕ çакăнта: тымар-çимĕçсене нумай колхозсем кирлĕ пек пăхса ӳстермерĕç, вĕсене тухăçлăн ӳстерессишĕн ĕçлекен уйрăм звеносем пулмарĕç. Выльăх-чĕрлĕх валли тымар-çимĕç лартнă çĕр лаптăкĕсем çумне кашни колхозрах уйрăм звеносене çирĕплетсе хумалла, кашни гектар пуçне уйрăм звеньевой пултăр, вăл звеньевойсен акмалли çĕр лаптăкĕсем çине тислĕк тăкас, юр тытса хăварас тата калчасене апатлантарма минераллă удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме халех тытăнмалла.

Силос тумалли курăксем нумайтарах акса хăвармалла. Кăçал, иртнĕ çулхи пек, силослăх курăк акас плана чакарни пулмалла мар. Кашни колхозăн силос тумалли культурăсене государство кăтартса панă чухлĕ акмалла. Выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрлемелле. Сĕлĕпе викăна пăрçа йышши культурăсемпе, пăрçана сĕлĕпе, хĕвелçаврăнăшне пăрçапа хутăш акса тăвассине анлăн сармалла. Çакă выльăхсемшĕн питех те кирлĕ нумай белоклă силос хатĕрлеме май парать, çавăн пек курăксенчен хывнă силос выльăхсемшĕн питех те паха, вăл выльăх апатĕнче тĕштырă нумай перекетлет. Силослăх курăксене ятарласа акса туни кирек мĕнле çанталăклă çулта та силос хывмалли плана ăнăçлăн пурнăçлама май туса парать.

Вăйлă апатсем çинчен уйрăмах чаранса тăмалла. Выльăхсем валли колхозсем тырра ялан пекех кирлĕ чухлĕ уйăрмаççĕ. Республикăри колхозсем çулсерен акса тунă фураж тыррисен—сĕллĕн тата урпан хисепĕ обществăллă выльăх-чĕрлĕх ыйтнин çурри çеç пулса тăрать. Çавăнпа выльăхсен апатне ытти тырăсене те нумай ямалла килсе тухать. Пирĕн колхозсем çулсерен пухса илнĕ тырăсен 30 процентне выльăх апатне яраççĕ. Çакă вăл пирĕн ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри пулса тăрать. Социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен хăйсен ĕçĕнче çакна çирĕп шута илмелле. Выльăх апатне каякан тырра перекетлĕн тыткалама тăрăшмалла, ăна ытти тĕрлĕ майсем тупса сахалрах расходлама тăрăшмалла. Сыснасен, чăх-чĕпĕн апатĕнче утă, клевер, пăрçа йышши культурăсен улăмĕн çăнăхĕ ытларах вырăн йышăнмалла. Выльăх апачĕшĕн акакан тырăсен—сĕллĕн тата урпан тухăçлăхне ӳстермелле, вĕсене нумайрах акмалла. Вĕсене кĕркунне сухаласа хăварнă вырăнсене акмалла, çуллахи вăхăтра калчасене çумкурăксенчен тасатсах тăмалла.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн опытлă участокĕнче тата Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра тунă опытсем çакна çирĕплетсе параççĕ: хутăш акнă сĕлĕпе пăрçа ăнăçлăн ӳсеççĕ, вĕсен тухăçлăхĕ уйрăммăн акса тунинчен ытларах пулать тата вĕсене машинăсемпе вырса пухма та лайăхрах.

Пăрçа йышши культурăсенчен выльăх апатĕнче чина пысăк вырăн йышăнма пултарать. Чина хăйĕн хими составĕпе пăрçана çывăх. Чина çирĕп культура, сивĕрен те, типĕрен те хăрамасть, лайăх ӳсет. Уйрăм çулсенче унăн тухăçлăхĕ пăрçа тухăçлăхĕнчен те ытларах пулать. 1941 çулта, тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозра гектартан вăтам шутпа пăрçа 10 центнер, чина—22 центнер тухнă. Выльăхсене усăллă белока пухнине илсен, чина сĕлĕрен малта тăрать, вăл хăйĕн тухăçлăхĕпе икĕ килограмм ырашпа танлашать. Чина пирĕн колхозсен уйхирĕнче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Чăваш республикинчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе иртнĕ çул пысăк çитĕнӳсем турĕç. 1943 çулта колхозсен выльăх-чĕрлĕхĕ татах та йышланмалла, тухăçлăхĕ хăпармалла. Çак ответлă задачăна пурнăçланă çĕрте выльăх-чĕрлĕхĕн апат-çимĕçне лайăхлатни, ӳстерни тĕп вырăн йышăнать.

К. НАУМОВ,
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, про —3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательст во конторин—0—23.

ЧТ 946 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 64 п.